ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНЕ

ХУЛА СТРОИТЕЛЬСТВИН ЕҪ-ХЕЛЕ ЕНЕПЕ ПУРНĂÇЛАМАЛЛИ УЙРĂМ ПОЛНОМОЧИСЕНЕ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МУНИЦИПАЛЛĂ УЙРĂМ ПЕРЛЕХЕСЕН ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНЕСЕМ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ ВЛАÇЕН ОРГАНЕСЕМ ХУШШИНЧЕ ÇЕНЕРЕН ПАЙЛАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья. **Çак Саккун йĕркелекен ыйтусем**

Çак Саккун Раççей Федерацийĕн Хула строительствин кодексĕн 8^2 статйипе, Федерацин "Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" 2003 çулхи юпа уйăхĕн 6-мĕшĕнчи 131-ФЗ №-лĕ саккунĕн 17 статйин 1^2-мĕш пайĕпе, Федерацин "Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче халăх влаçне йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" 2021 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 414-ФЗ №-лĕ саккунĕн 6 статйин 3-мĕш пайĕпе, Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелесси çинчен" 2004 çулхи юпа уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ саккунĕн 6 статйин 1.2-мĕш пайĕпе, 10 статйин 1-мĕш пайĕн 26-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн хула строительствин ĕç-хĕлĕ енĕпе пурнăçламалли уйрăм полномочисене Чăваш Республикин Сĕнтĕрвăрри муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Муркаш муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Çĕрпӳ муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Шупашкар муници-

паллă округĕн, Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар хулин тата Шупашкар хулин вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем (малалла çавăн пекех – Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем) тата Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче çĕнĕрен пайлассипе çыхăннă хутшăнусене йĕркелет.

2 статья. **Хула строительствин ĕç-хĕлĕ енĕпе пурнăçламалли уйрăм полномочисене çĕнĕрен пайласси**

1. Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хула строительствин ĕç-хĕлĕ енĕпе Чăваш Республикин Сĕнтĕрвăрри муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Муркаш муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Çĕрпӳ муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Шупашкар муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар хулин тата Шупашкар хулин вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен Раççей Федерацийĕн Хула строительствин кодексĕпе муниципаллă округсен, хула округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен полномочийĕсен шутне кĕртнĕ çак полномочийĕсене пурнăçлаççĕ:

1) муниципаллă округăн, хула округĕн хула строительствине проектламалли вырăнти нормативсене туса хатĕрлемелли, çирĕплетмелли тата вĕсене улшăнусем кĕртмелли йĕркене палăртасси;

2) муниципаллă округăн, хула округĕн хула строительствине проектламалли вырăнти нормативсене тата вĕсене кĕртнĕ улшăнусене çирĕплетесси;

3) муниципаллă округсен, хула округĕсен территорийĕсене планламалли документсен йышне, вĕсене туса хатĕрлемелли йĕркене, улшăнусене туса хатĕрлемелли тата вĕсене çавнашкал документсене кĕртмелли йĕркене палăртасси;

4) муниципаллă округăн тĕп планĕн проектне, хула округĕн тĕп планĕн проектне туса хатĕрлесси çинчен калакан йышăну, çавăн пекех муниципаллă округăн тĕп планне, хула округĕн тĕп планне улшăнусем кĕртмелли сĕнӳсем хатĕрлесси çинчен калакан йышăну тăвасси;

5) муниципаллă округăн тĕп планĕн проектне, хула округĕн тĕп планĕн проектне туса хатĕрлесси, муниципаллă округăн тĕп планне, хула округĕн тĕп планне çирĕплетесси, çав шутра муниципаллă округăн тĕп планне, хула округĕн тĕп планне улшăнусем кĕртесси.

2. Çак статьян 1-мĕш пайĕнче кăтартнă хула строительствин ĕç-хĕлĕ енĕпе пурнăçламалли полномочисене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ полномочи панă хула строительствин ĕç-хĕлĕ енĕпе патшалăх политикине пурнăçлакан Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ (малалла – полномочиллĕ орган) пурнăçлать.

3 статья. **Çĕнĕрен пайлакан полномочисене пурнăçлас ĕçе укçа-тенкĕпе тивĕçтермелли çăл куçсем**

Çак Саккунăн 2 статйин 1-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă полномочисене полномочиллĕ орган Чăваш Республикин Чăваш Республикин республика бюджечĕ çинчен калакан саккунĕпе çав тĕллевсем валли пăхса хăварнă бюджет укçи-тенки шайĕнче Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенки шучĕпе пурнăçлать.

4 статья. **Пĕтĕмлетӳ положенийĕсем**

1. Çак Саккунăн 2 статйин 1-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă полномочисене Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тата Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче чикĕсĕр вăхăта, анчах та Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн полномочийĕсен срокĕнчен кая мар вăхăта, çĕнĕрен пайлаççĕ.

2. Чăваш Республикин çак Саккун вăя кĕнĕ кунччен йышăннă тата çĕнĕрен пайлакан полномочисене пурнăçлас ĕçпе çыхăннă хутшăнусене йĕркелесе тăракан саккунĕсемпе çак Саккуна хирĕçлемен пайра усă кураççĕ.

3. Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен çак Саккунăн 2 статйин 1-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă полномочисене пурнăçлас ĕçе йĕркелесе тăракан уставĕсем тата муниципаллă ытти нормативлă право акчĕсем çак Саккуна тата Чăваш Республикин ытти нормативлă право акчĕсене хирĕçлемен пайра вăйра тăраççĕ.

4. Муниципаллă округсен, хула округĕсен тĕп планĕсене, муниципаллă округсен, хула округĕсен хула строительствине проектламалли вырăнти нормативсене (вĕсене туса хатĕрлесси е тата улшăнусем кĕртесси çинчен калакан йышăнусене çак Саккун вăя кĕнĕ кунччен йышăннă, çавăн пекех Раççей Федерацийĕн нормативлă право акчĕсемпе, Чăваш Республикин нормативлă право акчĕсемпе тата муниципаллă нормативлă право акчĕсемпе вĕсен тĕлĕшпе пăхса хăварнă килĕшӳ процедурисене çак Саккун вăя

кĕнĕ кунччен пуçарнă) Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çирĕплетеççĕ.

Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çак Саккун вăя кĕнĕ кунччен çирĕплетнĕ муниципаллă округсен, хула округĕсен тĕп планĕсем, муниципаллă округсен, хула округĕсен хула строительствине проектламалли вырăнти нормативĕсем çак Саккуна тата Чăваш Республикин ытти нормативлă право акчĕсене хирĕçлемен пайра вăйра тăраççĕ.

5. Çак Саккун 2025 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи юпа уйăхĕн 9-мĕшĕ
57 №